Чалата

28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ИЮНЬ
17
ВЫРСАРНИКУН
116 (6867) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе
Шупашкар хула комитечӗн,
ЧАССР Верховный Совечӗн
тата Шупашкар хула
Совечӗн каҫачӗ

Уйхире ҫумкурӑкӗнчен тасатар!

Тӑван ҫӗршыва ытларах тырпул, аш-какай, сӗт-ҫу туса парас тесе, республикӑри колхозсем кӑҫал ҫураки планне пӗлтӗрхинчен 10 кун маларах тултарчӗҫ, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана та ӑнӑҫлӑ пурнӑҫа кӗртнӗ.

Малта пыракан нумай колхозсем ҫӗртме те туса пӗтерчӗҫ. Халӗ ӗнтӗ кӑҫал вӑйлӑ тырпул туса илес енӗпе мӗн-мӗн тунине тата малашне мӗн-мӗн тума кирлине малтанласа пӑхса тухма та пулать: колхоз уйхирӗсенче кӑҫал, иртнӗ ҫултипе танлаштарсан, чылай ытларах ӗҫ тунӑ. Агротехника тӗлӗшӗнчен те уйхир ӗҫне тӗплӗнрех туса ирттернӗ: тӑпрана тарӑн сухаланӑ, вӑрлӑхсене чӳхесе тасатнӑ, яровизациленӗ, машинӑпа ретӗн-ретӗн акнӑ. Ҫанталӑк условийӗсем вӑйлӑ тырпул туса илме юрӑхлӑ пулса пыраҫҫӗ.

Халӗ колхозсенче вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫри чи ответлӑ иккӗмӗш тапхӑр — тырпула ҫумкурӑкӗсенчен тасатасси тата ретсем хушшинче ӗҫлесси пуҫланчӗ. Хальхи вӑхӑтра ялхуҫалӑх производствинче ҫак задачӑран пахараххи урӑх ҫук. Ҫумкурӑкне пӗр кун каярах ҫумласан та кашни гектартан пӗр-ик центнер сахалтарах тырпул пухса илетӗн. Малта пыракан колхозсемпе совхозсем тахҫанах ҫакна хӑйсен ӗҫӗнче тӗплӗн тӗрӗслесе пӑхнӑ: тырпула пӑхса ҫитӗнтерес тӗлӗшпе пур ӗҫсене те вӑхӑтра та тӗплӗ туса пырсан, тырпул тухӑҫӗ чылай ӳсет.

ВКП(б) Центральный Комитечӗ кӑҫалхи майӑн 25-мӗшӗнче йышӑннӑ хӑйӗн постановленийӗнче партипе совет организацийӗсене тата ҫӗрӗҫ органӗсене кӑҫал тырпулсене лайӑх пӑхса ҫитӗнтерес ӗҫ ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхма хушса хӑварчӗ. Уйхирсен чылай пайне ҫуркунне сухалани, ҫуркунне кая юлса килни, май уйӑхӗнче ҫанталӑк сивӗрех пулни, ҫав вӑхӑтрах ҫӑмӑр чылаях ҫуни,—ҫаксем кӑҫал пур ҫӗрте те пекех ҫумкурӑкӗсене ӳсме лайӑх условисем туса параҫҫӗ. Анчах пирӗн хӑшпӗр районсенче юлашки ҫулсем хушшинче ҫумкурӑкӗсене пӗтерес ӗҫ ҫине сӳрӗкрех пӑхма пуҫларӗҫ. Комсомольски районри колхозсен уйхирӗсене армути, пиҫен тата ытти тӗрлӗ ҫумкурӑкӗсем пусса илнӗ. Ҫакӑ ӗнтӗ колхозсен тырпул тухӑҫне чылай чакарать.

Ялхуҫалӑх культурисене пӑхса ҫитӗнтерес тӗлӗшпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ кӑтартса панисенчен ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомсем тивӗҫлӗ выводсем туман. Республикӑра ҫуракине пуринчен малтан пӗтернӗ Вӑрнар, Сӗнтӗр, Красноармейски районсенче те уйхирсене ҫумкурӑкӗсенчен тасатас енӗпе кирлӗ пек тӑрӑшни палӑрмасть-ха.

Вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн чӑннипе кӗрешекен колхозсем уйхире ҫумкурӑкӗсенчен тасатма тытӑннӑ ӗнтӗ. Ҫапла, Елчӗк районӗнчи Карл Маркс, Фрунзе тата Молотов ячӗпе тӑракан колхозсенче кӗрхи тырӑсен калчисене ҫумкурӑкӗсенчен тасатнӑ. Ишлей районӗнче те нумай колхозсенче кӗрхи тырӑсене ҫумласа тасатнӑ. Буденный ячӗпе тӑракан колхозра 20 гектар ҫурхи тырӑсене ҫумласа тасатнӑ. «Большевик», «Красный танк», «Богатырь», «Партизан» колхозсенче клевер пуссисене пӗрремӗш хут ҫумланӑ. Ҫав вӑхӑтрах Мамка ял Советне кӗрекен колхозсенче тата районри ытти хӑшпӗр колхозсене те кӗрхи тырӑсене ҫумласа пӗтермен, клевер хирӗсене те арӑмути пусса илнӗ. Ҫавӑн пекех Муркаш районӗнче те колхозсем ҫум ҫумлама тытӑнман.

Хӑшпӗр колхозсенче: «халӗ ҫумкурӑкӗсем вӗтӗ-ха, ҫумламалӑх та ҫук», тесе лӑпланса лараҫҫӗ. Пуриншӗн те паллӑ: тӑпрара, уйрӑмах тислӗк тӑкса е урӑх тӗрлӗ удобренипе ҫемҫетмен тӑпрара ӳсентӑрана ҫитӗнме кирлӗ япаласем те, нӳрӗ те ытлашши мар. Ҫумкурӑкӗ мӗн чухлӗ вӗтӗрех, вӑл тырпула ҫавӑн чухлӗ сахалтарах сиен кӳнӗ, ҫавӑнпа та ӑна ҫитӗнме памалла мар, ҫийӗнчех пӗтерсе пымалла.

Ахальтен мар ӗнтӗ ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ хӑйӗн постановленийӗнче калчасене ҫу каҫиччен сахалтан та 2—3 хут ҫумласа тасатма хушать. Ҫапла тусан ҫеҫ эпир ҫумкурӑкӗсене вӑхӑтра пӗтерсе пыма пултаратпӑр, тырпула кирлӗ тӑпрари апат-ҫимӗҫпе нӳрлӗхе усӑсӑр тӑккаланасран сыхласа хӑварма пултаратпӑр.

Колхоз уйхирне ҫумкурӑкӗнчен тасатасси, чи малтанах, колхозра ӗҫе пӗлсе тӗрӗс организациленинчен килет. Ку ӗҫе ялта ӗҫлеме пултаракан пур ҫынсене те хутшӑнтармалла, вӗсен ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелесе ертсе пымалла.

Малта пыракан колхозсенче юр кайса пӗтиччченех кӗрхи тырӑсем акнӑ участоксене пӑхса тӑмашкӑн уйрӑм звеносем тунӑ, ҫурхи культурӑсене акнӑ хыҫҫӑн пӑхса ҫитӗнтермешкӗн те звеносем туса йӗркеленӗ. Халӗ ӗнтӗ звенори кашни ҫынна калчасене ҫу каҫиччен ҫумласа тӑмашкӑн пӑхса ҫитӗнтермешкӗн уйрӑм участоксем уйӑрса памалла. Кунта ӗҫ нормисене уйхире ҫумкурӑкӗ мӗн тери вӑйлӑ пусса илнине шута илсе туса памалла. Ҫак ӗҫсене кашни звено членӗ тӗплӗн тата тӗрӗс туса пынине бригадирсен тӑтӑшах тӗрӗслесе пырас пулать.

Уйхире ҫумкурӑкӗсенчен тасатма тата ретсем хушшинчи тӑпрана кӑпкалатма кирлӗ ӗҫ хатӗрӗсене ҫителӗклӗ таранах хатӗрлесе памалла.

Ҫаксем ӗнтӗ калчасене вӑхӑтра тата тӗплӗн ҫумласа тасатма, уйрӑм сдельщинӑпа анлӑн усӑ курма, ҫакна пула вара колхозниксен ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартма май параҫҫӗ. Ӗҫе ҫакӑн пек организацилесен кӑна кӗрхи тырӑсене ир ҫумласа пӗтерме, ҫурхи тырӑсене ҫу каҫиччен 2—3 хут ҫумласа тасатма тата ретсем хушшине сахалтан та 2—3 хут кӑпкалатса тухма пулать. Кӑҫалхи условисенче ҫак асӑннӑ ӗҫсем вӑйлӑ тырпул туса илмелли чи кирлӗ ӗҫсем пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫум ҫумлас ӗҫе колхозри ӗҫлеме пултаракан пур ҫынсене те явӑҫтармалла. Ку ӗҫе арҫынсен, хӗрарӑмсен, ваттисемпе ача-пӑчасен те хутшӑнмалла. Уйхире кар тухса ӗҫлесен ҫеҫ эпир колхоз уйхирне ҫумкурӑкӗнчен тасатса, тырпул тухӑҫне ӳстерме пултаратпӑр. Колхоз председателӗсен уйра ӗҫлекенсен ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартма кирлӗ условисене туса памалла. Уйхир ӗҫӗсем вӑхӑтӗнче ача яслисемпе сачӗсем уҫмалла, ун пек тума май килмен колхозсенче ачасене ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пӗрлештерсе, вӗсене пӑхма опытлӑ ватӑрах колхозницӑсене, учительницӑсене, медицина работникӗсене хушмалла. Уйхирте ӗҫлекен колхозниксем хӑйсен ӗҫ вӑхӑтӗпе туллин усӑ курччӑр тесе, вӗсене валли уйрах столовӑйсем уҫмалла.

Ҫумкурӑкӗсемпе кӗрешесси вӑл—вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫӗн уйӑрӑлми пайӗ пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та ку ӗҫе пӗтӗм вӑя хурса тӗплӗн туса пымалла.

ТАСС пӗлтерни

Совет органӗсен аллинчи хыпарсем тӑрӑх, Швейцарире ҫак вӑхӑтчченех нимӗҫсем патӗнчен тытӑнран тарнӑ 10 пин ҫынна яхӑн совет гражданӗсем тата ҫар ҫыннисем пурӑнаҫҫӗ. Швейцари влаҫӗсем ҫав совет гражданӗсене хӑйсен Тӑван ҫӗршывне таврӑнма чарса тӑраҫҫӗ, унсӑр пуҫне тата Швейцари влаҫӗсем ҫав ҫынсене нумайӗшне тӳсме ҫук йывӑр условисенче тытаҫҫӗ.

Ҫав совет гражданӗсемпе ҫар ҫыннисем Швейцарире ҫав тери йывӑр условисенче пурӑнни ҫинчен Швейцари хаҫачӗ «Фрейе Югенд ин Швейц» ҫырса кӑларнӑ. Ҫав хаҫат Швейцари влаҫӗсем Швейцарири Вовиллермоосе ятлӑ лагерьте Михаил Кондратьев красноармееца тискеррӗн вӗлерни ҫинчен калаҫа панӑ. Ҫав хаҫатах Швейцарире уйрӑм лагерьсенче тытакан совет гражданӗсем этем тӳсме пултарайми йывӑр условисенче пурӑнни ҫинчен ҫырнӑ. Швейцари влаҫӗсем унти совет гражданӗсене питӗ йывӑр ӗҫлеттереҫҫӗ, пусмӑрлаҫҫӗ. Вӗсем унти совет гражданӗсене йытӑсем кӑларса ярса суранлаҫҫӗ, совет гражданӗсене винтовкӑсемпе, автоматсемпе переҫҫӗ. Швейцари влаҫӗсем пӗр айӑпсӑр совет ҫыннисене, гитлеровецсем хӑтланнӑ пекех, пур тискер майсемпе те мӑшкӑлласа асаплантараҫҫӗ.

Ҫаксене пурне те шута илсе, Совет правительстви хӑйӗн органӗсене Швейцарие ямалли мӗнпур Швейцари гражданӗсене унта яма чарӑнма хушнӑ. Швейцарин Хӗрлӗ Ҫар ирӗке кӑларнӑ гражданӗсене Швейцарие ярассине Швейцари влаҫӗсем унти совет гражданӗсен условийӗсене лайӑхлатас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ ӗҫсем туни ҫинчен тата ҫав совет гражданӗсене Совет Союзне хӑвӑртрах ярас тӗлӗшпе кирлӗ пек ӗҫлеме тытӑнни ҫинчен тӗплӗ хыпарсем иличчен чарса лартнӑ.

Пӗр-пӗрин туслӑ пурӑнасси, пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесси ҫинчен Совет Союзӗпе Югослави тунӑ килӗшӗве СССР Верховный Совечӗн президиумӗ ратификациленӗ

1945 ҫулхи июнӗн 15-мӗшӗнче СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе Югослави пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнасси, пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрасси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесси ҫинчен тунӑ Килӗшӗве, Мускавра 1945 ҫулхи апрелӗн 11-мӗшӗнче алӑ пуснӑскерне, ратификациленӗ.

АМЕРИКАНЕЦСЕМ БЕЛОРУССИ СТОЛИЦИНЕ ПАНА ПАРНЕ

МИНСК, июнӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Минск хулине Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчен 500 койкӑлӑх больница валли пӗтӗм оборудовани ҫитнӗ. Ҫав парнене Белорусси столицине американецсен Хӗрлӗ Хӗрес Обществи янӑ. Ҫак япаласем килнӗ: икӗ ҫӗнӗ [illegible] [illegible], [illegible] раторн оборудованийӗ, хирурги инструментарийӗ, ҫыхмалли материалсем, койкӑсем ҫине сармалли япаласем тата медикамент нумай килнӗ.

Ҫав парнене Гитлер вӑрӑ-хурахӗсенчен пуринчен те ытларах сиен курнӑ Минск хулинчи [illegible]-мӗш клиника больницине панӑ.

Ӗҫҫынни депутачӗсен райсовечӗсен исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне ӑнӑҫлӑ тултарнӑшӑн тата выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн малта пыракан ҫак колхозсемпе колхозниксене республикӑри ХИСЕП ХӐМИ ҫине кӗртнӗ:

ЧКАЛОВСКИ РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

41. **«Красный Октябрь» колхоз** (председателӗ **Булатов** юлташ, ферма заведующийӗ **Вахитова** юлташ) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 100 процент, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 108 процент, сыснасем енӗпе 105 процент, сурӑхсем енӗпе 137 процент тултарнӑ, ҫамрӑк выльӑхсене пурне те сыхласа хӑварнӑ, государствӑна аш-какай планран ирттерсе парса татнӑ.

42. **«Маяк» колхоз** (председателӗ **Минаев** юлташ, ферма заведующийӗ **Гайнуллина** юлташ) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем енӗпе 101 процент, сурӑхсем енӗпе 104 процент, сыснасем енӗпе 100 процент тултарнӑ. Ҫамрӑк выльӑхсене пурне те сыхласа хӑварнӑ. Государствӑна аш-какай парса татнӑ.

43. **«Кзыл-тан» колхоз** (председателӗ **Фейзуллин** юлташ, ферма заведующийӗ **Шарафутдинова** юлташ) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 105 процент, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 111 процент, сыснасем енӗпе 100 процент, сурӑхсем енӗпе 113 процент тултарнӑ. Ҫамрӑк выльӑхсене пурне те сыхласа хӑварнӑ, государствӑна ҫулталӑкшӑн аш-какай парса татнӑ, сӗт 65 процент панӑ.

ВӐРНАР РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

44. **«Первое мая» колхоз** (председателӗ **Я. В. Васильев** юлташ, ферма заведующийӗ **И. В. Васильев** юлташ, лаша фермин заведующийӗ **М. Ф. Федоров** юлташ) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 102 процент, мӑйракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 103 процент, сыснасем енӗпе 106 процент, сурӑхсем енӗпе 129 процент тултарнӑ. 19 кӗсререн 17 тиха, 100 сурӑхран 115 путек илсе ҫитӗнтернӗ. Государствӑна ҫулталӑкшӑн аш-какай парса татнӑ.

Ку колхозра сурӑх пӑхакан **П. В. Волкова** юлташ 5 уйӑх хушшинче 100 сурӑхран 130 путек илнӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

М. А. Алексеев юлташа Чӑваш АССР Юстици Халӑх Комиссарӗ пулма лартасси ҫинчен

Максим Алексеевич Алексеев юлташа Чӑваш АССР Юстици Халӑх Комиссарӗ пулма лартас.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

1945 ҫулхи июнӗн 16-мӗшӗ.

СССР Наука Академийӗн юбилейлӗ сессийӗ умӗн

СССР Наука Академийӗн юбилейлӗ сессине Мускава Совет Союзӗн тата пӗтӗм тӗнчери наукӑн деятелӗсем килеҫҫӗ. Академи президиумӗ вырнаҫнӑ Нескучнӑй дворец залӗсенче Ҫӗпӗрти тата Украинӑри, Армянири тата Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи чаплӑ ученӑйсем пӗр-пӗринпе тӗл пулаҫҫӗ. Вӑрҫӑн йывӑр кунӗсенче вӗсем лабораторисенче, клиникӑсемпе цехсенче хӑйсен мӗнпур вӑйӗпе пӗлӗвне тата опытне тӑшмана аркатас ӗҫе хывнӑ.

Ирхине Украина ученӑйӗсен делегацийӗ килсе ҫитнӗ. Делегацие Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ—Украина ССР-ӗнчи Наука академийӗн президенчӗ А. А. Богомолец ертсе пырать. Делегацие Украинӑри 30 ученӑй ытла кӗнӗ.

Совет Союзӗн пур кӗтесӗсенчен те килнӗ ученӑйсем Наука академине тата унӑн паллӑ деятелӗсене хӗрӳллӗ саламсем илсе килнӗ. Ленинградран Пӗтӗм Российӑри Художество академийӗ илемлетсе тунӑ адрес-салам янӑ.

* * *

Наука академийӗн Президиумӗ Америкӑпа Европӑри паллӑ ученӑйсене савӑнӑҫлӑ юбилее килме чӗннӗ. Ют ҫӗршывсенчи наука деятелӗсем ҫав чӗнӗве хапӑл тусах йышӑннӑ. Кашни кунах Мускава ют ҫӗршывсенчен йышлӑ делегацисем килеҫҫӗ. Ӗнер столица общественноҫӗ Англин, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Чехословакин, Иранӑн тата ытти ҫӗршывсенчи ученӑйсене кӗтсе илнӗ.

Ют ҫӗршывсенчи хӑнасене кӗтсе илме Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗсем академиксем П. Л. Капица тата И. П. Бардин, академиксем А. Ф. Иоффе тата А. Н. Фрумкин, М. В. Беляков генерал-майор, СССР Наука академийӗн институчӗсен руководителӗсем пынӑ. Аэродромра Англин, США-н, Иранӑн посольствисемпе миссийӗсен членӗсем, Совет Союзӗпе ют ҫӗршыв писателӗсен корреспонденчӗсем пулнӑ.

5 сехетре Англи ученӑйӗсем килсе ҫитнӗ. Вӗсене Лондонри король обществин вице-президенчӗ Роберт Робинсон сэр ертсе пырать. Делегаци составӗнче Великобританири паллӑ 20 ученӑй пур.

Англи делегачӗсем Великобританири тӗрлӗ наука обществисемпе организацийӗсенчен саламлӑ адрессем илсе килнӗ. Вӗсене юбилейлӗ сессире вуласа параҫҫӗ.

* * *

6 сехетре каҫхине Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ученӑйӗсем килсе ҫитнӗ. Вӗсене Гарвард университечӗн профессорӗ Х. Шепли ертсе пырать. Шепли профессор совет ученӑйӗсене делегаци участникӗсемпе паллаштарать. Вӗсен шутӗнче физикӑпа хими наукисен паллӑ деятелӗ И. Лангмюйром пур.

15 ҫынтан тӑракан Америка делегацийӗпе пӗрле Мексикӑн паллӑ ученӑйӗ физик Вайрта профессор, Калькута университечӗн профессорӗ Мегхекнад тата ыттисем те килнӗ.

Ӗнер Мускава ҫавӑн пекех Чехословаки ученӑйӗсен делегацийӗ килнӗ. Вӗсене профессор З. Нееды ертсе пырать. Иранри Наука академийӗн президенчӗ Самин профессор ертсе пыракан Иран делегацийӗ килнӗ.

Юбилее килнӗ Югослави ученӑйӗсен делегацийӗн составӗнче Сербири Наука академийӗн президенчӗ А. Белич академик, Серби Скупщинин президенчӗ — Сербири Наука академийӗн членӗ С. Станкович, Белградри университетӑн ректорӗ тата Белградри мӗнпур славянсен комитечӗн президенчӗ Е. Недселькович, Словенири Наука академийӗн представителӗ Ф. Кидрич академик тата Белградри университетӑн профессорӗ П. Савич пур. (ТАСС).

СССР Наука академийӗ 220 ҫул тултарнӑ ятпа пы ачан уява килӗ ученӑйсене йышӑнни

Июнӗн 15-мӗшӗнче Мускавра СССР Наука академийӗ 220 ҫул тултарнӑ ятпа чаплӑ уяв пуҫланнӑ.

Нескучнӑй дворецра йышӑну пулса иртнӗ, унта юбилейлӗ сессие килнӗ ученӑйсене йышӑннӑ. СССР Наука академийӗн Президиумӗн Конференц-залне совет наукин чи паллӑ представителӗсем, ют ҫӗршывсенчен килнӗ ученӑйсем, артистсем, художниксем, совет тата ют ҫӗршыв хаҫат-журналӗсен представителӗсем пухӑннӑ. Юбилее килнӗ хӑнасене Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ — Наука академийӗн пӗрремӗш вице-президенчӗ Л. А. Орбели йышӑннӑ. Совет ученӑйӗсем ют ҫӗршывсенчен килнӗ хӑнасемпе туслӑн паллаштарнӑ. Совет ученӑйӗсем—физиксем, математиксем, физиологсем, медиксем Америкӑри тата Европӑри наука учрежденийӗсен делегачӗсене хӑйсен опычӗсемпе паллаштарнӑ, совет науки тунӑ ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем ҫинчен, ҫав ҫитӗнӳсем гитлерла Германие аркатса тӑкма пулӑшни ҫинчен кала-кала кӑтартнӑ.

19 сехетре хӑнасене йышӑнма Нескучнӑй двореца СССР Наука академийӗн Президенчӗ Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ В. Л. Комаров академик пынӑ. Унӑн ӗҫӗсене пӗтӗм тӗнче пысӑка хурса йышӑннӑ. Совет ученӑйӗсемпе ют ҫӗршывсенчен килнӗ ученӑйсем совет наукин ҫавӑн пек паллӑ деятельне ӑшшӑн саламланӑ. Францири Наука академийӗн членӗ Огюст Шевалье Франци ученӑйӗсен делегацийӗ ячӗпе В. Л. Комаров Президента хӗрӳллӗн саламланӑ. Ытти ҫӗршывсенчен килнӗ ученӑйсем те Президента ҫавӑн пекех саламланӑ.

Наука академийӗн йышӑнӑвӗнче СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗсен Заместителӗсем А. Я. Вышинский юлташпа С. А. Лозовский юлташ пулнӑ, ҫавӑн пекех тата Г. Ф. Александров юлташ, СССР Совет писателӗсен союзӗн правлени председателӗ Н. С. Тихонов, артиллерин главнӑй Маршалӗ Воронов, контр-адмирал И. Д. Папанин тата ыттисем те пулнӑ.

Йышӑну ӑшшӑн та туслӑн пулса иртнӗ.

(ТАСС)

ТРУМЭН ПРЕЗИДЕНТ ҪЫРӐВӖ

И. В. Сталин Маршала

Эсир июнӗн 12-мӗшӗнче янӑ хаклӑ ҫырушӑн эпӗ Сире хам тата Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви ячӗпе тав тӑватӑп.

Эпӗ ҫакна ҫирӗп шанса тӑратӑп: эпир малашне те туслӑн ӗҫлесе пурӑнни мирлӗ пурнӑҫа тата халӑхсем хушшинчи ырӑ ирӗклӗхе сыхласа тӑрас ӗҫре, эпир нацистсене хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑра пӗрле ӗҫлени пекех, ӑнӑҫлӑ пулӗ.

Сирӗнпе ҫак ҫывӑх вӑхӑтрах тӗл пулса, хамӑр умра тӑракан пысӑк ыйтусене пӗтӗмӗшпех сӳтсе-явма пултарнӑшӑн эпӗ малтанах питӗ хытӑ хӗпӗртесе тӑратӑп.

Уяв тӗлне государствӑна какай, сӗт-ҫу парса татассишӗн

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Районри колхозсем Чӑваш республики 25 ҫул тултарнине государство умӗнчи парӑмсене срокчен парса татнипе кӗтсе илессишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ячӗҫ.

Малта пыракан колхозсем аш-какай памалли плана тултарса, ҫитес ҫулшӑн пама тытӑнчӗҫ. Ҫичпӳртри Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз 6 центнер, «Память Ленина» колхоз 5 центнер, Вӑрман Кушкӑри «Ҫутталла» колхоз 5 центнер, Улмалуйри «Красный танк» колхоз 6 центнер 1946 ҫулшӑн аш-какай пачӗҫ.

Ӳпнерти «Молния» колхоз 1945—1946 ҫулсенче аш-какай памалли плана пӗтӗмпех тултарса, 1947 ҫулшӑн 8 центнер парса хунӑ.

1945 ҫулшӑн районӑн государствӑна пурӗ 1.467 центнер аш-какай памалла пулсан, паянхи куна 1.269 центнер панӑ.

Халӗ районра уяв кунне аш-какай памалли плана пӗтӗмӗшпех пурнӑҫласа ҫитерессишӗн кӗрешӳ пырать.

Район ҫӑмарта тӗлӗшпе те ҫитӗнӳсем турӗ. Услӑ Пукашри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна 1936 штук, Ипреялти «Заря» колхоз 1.421 штук ҫӑмарта парса, 1945 ҫулхи плана ирттерсе тултарнӑ. Ҫак кунсенчех Чӗнтӗрти Тимошенко ячӗпе тӑракан колхозпа Илменкассинчи «Молния» колхозсем те ҫӑмарта парса татаҫҫӗ.

Районри малта пыракан колхозсем уяв тӗлне государствӑна сӗт-ҫу памалли ҫулталӑкри плана 50 процента ҫити тултарма пулчӗҫ. Халӗ вӗсем чылайӗшӗ хӑйсен обязательствине пурнӑҫларӗҫ. Кутемерти «Коммунизм» колхоз планпа 165 килограмм ҫу памалла пулсан, паянхи кун тӗлне 97 килограмм панӑ. Энтрипасарӗнчи «Новая жизнь» колхоз ҫулталӑкри плана 62 процент тултарчӗ. Анчах, пӗтӗмӗшпе илсен, районра государствӑна сӗт-ҫу парас ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пырать-ха.

Государствӑна аш-какай, сӗт-ҫу, ҫӑмарта тата ытти ялхуҫалӑх продуктӗсем парассине пур колхозсенче те йӗркелесе яман. Чикмеҫинчи «17 съезд ВКП(б)» колхозпа Чӑрӑшкассинчи Киров ячӗпе тӑракан колхозсем государствӑна 1946 ҫулшӑн пӗр килограмм та аш-какай паман. «Осоавиахим» колхозпа Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз ку таранах ҫитсе пӗр килограмм ҫу та паман.

Н. АНДРЕЕВ.
(Хамӑр корр.).

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницӑсем «Красная Кубня» колхоз колхозникӗсен чӗнӗвне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен парса татма тӑрӑшаҫҫӗ. Район июнӗн 7-мӗшӗ тӗлне 1945 ҫулта аш-какай памалли плана 76 процент тултарчӗ. «Красный Борденер», «Буксир» колхозсем аш-какай тата сӗт-ҫу памалли плана 100 процентчӗпех тултарчӗҫ.

Байсубино ял Советӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз сӗт-ҫу памалли плана 80 процент, аш-какай памалли плана 100 процент тултарчӗ. Ҫавӑн пекех «Малалла» колхоз та, республика юбилейне хатӗрленнӗ май, аш-какай тата сӗт-ҫу парас ӗҫ хӑвӑртлӑхне нумай ӳстерчӗ. Ку колхоз аш-какай памалли плана 90 процент, сӗт-ҫу памалли плана 50 процент тултарчӗ.

Районӗпе илсен, 37 колхоз аш-какай памалли ҫулталӑк планне 100 процент тултарнӑ.

Ҫӑм хатӗрлес ӗҫ районра юлса пырать. Паянхи кун тӗлне ҫӑм хатӗрлемелли плана пурӗ те 26 процент кӑна пурнӑҫланӑ.

С. ШАДИН.
(Хамӑр корр.).

Республикӑри ҫулсем ҫинче

КАНАШ, июнӗн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем ҫулйӗр строительствине хастарлӑн тытӑнчӗҫ. Акӑ, Асхвари «Красное пламя» колхозӑн ҫул ҫине планпа 100 кубометр чул хатӗрлесе турттармалла пулнӑ. Паянхи куна 90 кубометр турттарнӑ. Уйрӑмӑнах ку ӗҫре 4-мӗш бригада (бригадирӗ Данилова юлташ) малта пырать.

Ҫав вӑхӑтрах Сухайкасси ял Советӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Баранов юлташ), «Красная Чувашия» колхоз (председателӗ Никитина) тата «3-я Пятилетка» колхоз (председателӗ Лукина юлташ) ҫулйӗр строительствинче япӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен план тӑрӑх 160 кубометр чул хатӗрлесе турттармалла пулнӑ. Ку таранччен вӗсем 30 кубометр анчах турттарнӑ.

Ҫӗнӗ Ахпӳртри «Красный путиловец» колхоз (председателӗ Шишкин юлташ) 100 кубометр турттарас вырӑнне 40 кубометр, Сиккассинчи Доронин ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Филиппов юлташ) пурӗ те 20 кубометр анчах турттарнӑ.

Ҫак юлса пыракан колхозсен ӗҫ хӑвӑртлӑхне ӳстермелле.

В. ИЗЮМОВ.

* * *

УРАЧӐК. „Герой“, „III Интернационал“ тата „Гвардеец“ колхозсем ҫулйӗр юсас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Вӗсем Ҫака Тавӑш ҫырми урлӑ каҫса ҫӳремелли ҫула анлӑлатса тикӗслетрӗҫ. Ҫул айккинчи шырлансене тӑпра купаласа тултарчӗҫ. Унта йӑмрасем лартрӗҫ. Унсӑр пуҫне ял хушшинчи ҫулсене пӗтӗмпех юсаса тикӗслетнӗ. Ҫулсем ҫинче ял Советӗнчи виҫӗ колхозран кашни кун 90-шар ҫын ӗҫленӗ.

Ҫулйӗре юсаттарас ӗҫе ял Совет председателӗ Илларионов, колхоз председателӗ Никитин тата ватӑ колхозник М. Осипов тимлӗн ертсе пычӗҫ.

С. Шадин.

СӖНТӖР. Районри колхозсем ҫулйӗр строительствин ҫирӗмкунлӑхӗнче 1777 кубометр хӑйӑр, 209 кубометр чул тата 122 кубометр йывӑҫ хатӗрлесе турттарнӑ. Ҫавӑн чухлӗ строиматериалпа 35 километр тӑршшӗ ҫула юсанӑ, 925 метр тӑршшӗ ҫул ҫине шашка сарса тухнӑ, ҫӗнӗрен пӗр кӗпер тунӑ. Халӗ Сӗнтӗр, Хачӑк тата Ахмане ҫывӑхӗнчи кӗперсене юсаҫҫӗ.

Чылай колхозсем Горькипе Хусан хушшинчи мӑн ҫул ҫинче ӗҫлерӗҫ. Кунта вӗсем ҫула якатса хытарчӗҫ, икӗ енӗпе канавсем чаврӗҫ, 50 пин тӗп йывӑҫ лартрӗҫ.

Ҫирӗмкунлӑхра „Новый путь“, Чкалов ячӗпе тӑракан тата Юнкӑ ял Советӗнчи колхозсем уйрӑмах тимлӗн ӗҫлерӗҫ.

А Соловьев.

* * *

ЕЛЧӖК. Районри чылай колхозсем ҫулйӗр строительствин ҫирӗмкунлӑхне активлӑн хутшӑнчӗҫ. Аслӑ Елчӗкри Ленин ячӗпе тӑракан колхозран кашни кун 200 ҫын ҫуран, 40 ҫын лашапа ӗҫлерӗҫ. Колхоз чул кӑларса турттармалли плана июнӗн 5-мӗшӗ тӗлне тултарчӗ. Пурӗ 175 кубометр чул кӑларса турттарнӑ.

Патрекелӗнчи „Осоавиахим“ колхоз хӑйӑрпа чул кӑларса турттармалли заданисене июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫларӗ. Унсӑр пуҫне 250 кубометр ытла ҫӗр чавса купаларӗ. Н. Орлова, Е. Борисова, Л. Петрова, Ф. Иванова, М. Петрова, М. Арбузова тата ытти колхозницӑсем те кашни кун 4-шар кубометр ҫӗр чавса купаларӗҫ.

Орденлӑ „Ново-Ищеряково“ колхоз 11 лашапа ӗҫлесе, чул турттармалли плана икӗ кун хушшинче тултарчӗ. Ҫавӑн пекех Ворошилов, Сталин ячӗпе тӑракан, „Знамя“, „Новый путь“, „Канаш“ колхозсем те чул кӑларса турттармалли плана июнӗн 6-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫларӗҫ.

И. Петров.

Хӗвел тӗттӗмленес умӗн

ИВАНОВО, июнӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта июлӗн 9-мӗшӗнче хӗвел тӗттӗмленнине сӑнама В. Г. Фесенков академик тата СССР Наука академийӗн член-корреспонденчӗ Г. А. Тихов килнӗ. ТАСС корреспонденчӗпе калаҫнӑ чухне вӗсем ҫапла пӗлтернӗ:

Хӗвел тӗттӗмленнине пӗтӗм ҫӗршывӗпе 22 Наука экспедицийӗ сӑнаҫҫӗ. Вӗсенчен виҫҫӗшӗ: СССР Наука академийӗн Астрономи институчӗн экспедицийӗ, Пулков обсерваторийӗн тата Мускаври педагогика институчӗн экспедицийӗсем Ивановӑна килнӗ. Халӗ кунта Мускавран, Ленинградран тата Алма-Атаран илсе килнӗ приборсене вырнаҫтарса лартаҫҫӗ. Вырӑнти организацисем экспедицисене пур енчен те пулӑшса тӑраҫҫӗ. Ҫанталӑк япӑх пулсан, кун тӗтреллӗ пулсан, ученӑйсем сӑнама самолетсемпе сывлӑша хӑпараҫҫӗ.

Комсомолăн чăваш организацийĕн 1-мĕш съезчĕ пулнăранпа 25 çул тултарчĕ

Çирĕм пилĕк çул каярах, 1920 çулхи июнĕн 16-мĕшпе 20-мĕш кунĕсем хушшинче, Хусанта Чăваш комсомолĕн Пĕтĕм Российăри 1-мĕш съезчĕ пулса иртнĕ. Çав съездра 100 делегат пулнă; вĕсене Хусан, Чĕмпĕр, Самар тата Ĕпхÿ губернийĕсенчи комсомолăн чăваш организацийĕсем—пĕтĕмпе 500 комсомолец йышĕнчен суйласа янă.

Чăваш комсомолĕн 1-мĕш съездне РКП(б) Хусан Губкомĕ çумĕнчи Чăваш секцийĕ, Национальноçсен Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Чăваш отделĕ тата РКСМ Хусан Губкомĕ çумĕнчи Чăваш бюровĕ пуçарнипе пухнă. Съездра комсомолăн Центрти Чăваш бюровне суйласа хăварнă. Тĕрессипе, çав съезд, çапла вара, комсомолăн Чăваш организацийĕн никĕсне хывнă.

Чăваш комсомолецĕсем хăйсен пĕррремĕш съездне граждан вăрçи вăхăтĕнче пуханнă. Çамрăк совет республики, Октябрьти революцире ирĕке тухнă ĕçхалăхĕ ют çĕршыв интервенчĕсемпе белогвардеецсен çарĕсене хирĕç пĕтĕм вăя хурса çапăçнă. Тин çеç çуралнă паттăр Хĕрлĕ Çар çав вăхăт тĕлне чылай фронтсенче пысăк çĕнтерÿсем тунă ĕнтĕ. Анчах лару-тăру пирĕн Тăван çĕршывшăн çапах та хăрушă пулнă. Ултă çул хушши ыттисем пынă вăрçа пула, халăх хуçалăхĕ арканса пĕтнĕ. Контрреволюци вăйĕсене хирĕç юн юхтарса кĕрешнипе пĕрлех, ĕçхалăхĕн промышленноçпа транспорта, ялхуçалăхне юсама тытăнмалла пулнă.

Çакăнтан тухса тăнă ĕнтĕ чăваш комсомолецĕсен задачисем те. Вĕсен пĕрремĕш съезчĕн ĕçĕсенче çав хĕрÿлле вăхăтри событисем палăрса тăраççĕ.

Съездăн кун йĕркинче çакăн пек ыйтусем пулнă: 1) хальхи лару-тăру, 2) çамрăксем хушшинчи революцилле юхăмăн историйĕ, 3) РКСМ-ăн халăха çутта кăларас ĕçри вырăнĕ, 4) çамрăксем хушшинче ĕçлесси, 5) чăваш коммунисчĕсен Пĕтĕм Российăри 1-мĕш съезчĕ тата чăвашсен ĕç коммуни çинчен, 6) вырăнсенчен килнĕ делегатсен доклачĕсем, 7) организацилле ыйту—комсомолăн Центрти Чăваш бюровне суйласси.

Çав съезд чăваш комсомолецĕсемпе вĕсен организацийĕсене пĕтĕçтерсе, организацилĕх тĕлĕшĕнчен çирĕплетме, чăваш ĕçсамрăкĕсем хушшинче коммунистла ĕçе вăйлатма, вĕсен культурăлла шайĕпе класлă аталанулăхне ÿстерессишĕн çине тăрса ĕçлеме тытăнма, вĕсене революци ĕçĕшĕн, çĕнĕ пурнăçшăн активлă кĕрешĕве мобилизацилеме пулăшнă. Съездри докладчиксемпе тухса калакансем хăйсен сăмахĕсенче интервентсемпе белогвардеецсене çапса аркатма фронта вăйлăнрах пулăшасси çинчен, хуçалăха юсас, çĕнĕ пурнăç тăвас, киве саманаран юлнă тĕттĕмлĕхпе ĕçшмĕшлехе хирĕç кĕрешес ĕçе комсомолецсен активлăнрах хутшăнма кирлĕ çинчен каланă. Съездра йышăннă резолюцисенче чăваш ялĕсенче, революцилле ĕçе туса пымалли çулйĕрсене палăртнă.

Вăл вăхатри лару-тăру пирки йышăннă резолюцире çапла каланă: „...Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар кăна пире хамăран таса ĕçе — мирлĕ ĕçе тытăнма май парать. Пирĕн фронта сăмахпа çеç мар, фронтран аякра тăракан тылри ĕçпе те пулăшмалла...“, тенĕ. Съезд вара делегатсен составĕнчен 5 процентне РКСМ Центральный Комитечĕ çумĕнчи Хĕрлĕ Командирсен Курсне мобилизацилеме йышăннă. Хăшпĕр делегатсем хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара кайма кăмăл тунă.

Чăваш комсомолĕн 1-мĕш съезчĕ пирĕн коммунистсен партийĕн аслă çулпуçĕсем патне—Ленинпа Сталин патне саламлă телеграммăсем янă.

„Чăвашсен коммунистла çамрăкĕсем коммунизм идейисене хÿтĕлемешкĕн пĕр çын пек пулса кĕрешĕве тухма тата тĕнчери тискер кайăксемпе вăрă-хурахсене ялан-лăхах пĕтерсе тăкас тесе пĕтĕм вăя хума хатĕр тăраççĕ“,—тенĕ Ленин патне янă телеграммăра.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтернине пула, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе ирĕке тухнă чăваш ĕçсамрăкĕсем, ĕмĕрте малтанхи хут хăйсен çав съездне пухăнса, политикăпа культура ыйтăвĕсене ирĕклĕн сÿтсе-явма пултарнă. Пусмăрлăхпа чуралăхран тухнă чăваш ĕçсыннийĕсем хăйсен таса ĕмĕтне—ирĕклĕ çĕнĕ пурнăç тăвас ĕмĕтне уçăмлăн палăртнă.

Чăваш комсомолĕ граждан вăрçи вут-çулăмĕнче çуралнă. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, комсомолăн Чăваш организацийĕ хăй утса тухнă 25 çул хушшинче пирĕн аслă Тăван çĕршыври социализм строительствин нумай тĕрлĕ участокĕсемпе ĕçĕсене активлăн хутшăнса пычĕ; вăл парти организацийĕн тÿрĕ помощникĕ пулнине кăтартса пачĕ. Çав ĕçре тата кĕрешÿре Чăваш комсомолĕ ÿссе тĕреклленчĕ, халĕ ĕнтĕ вăл хăй таврачăваш ĕçсамрăкĕсен нумай пинлĕ çарне пĕтĕçтерсе тăрать. Вăл Ленин—Сталин партийĕн ĕçне чĕререн парăнса кĕрешекен паттăрсемпе сахал мар пăхса çитĕнтерчĕ.

Гитлерла Германие хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Тăван çĕршывшăн питех те пысăк ĕçсем тунăшăн тата совет çамрăкĕсене Тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе анăçлă ĕçленĕшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕ кăçал **Çамрăксен Пĕтĕм Союзри Ленинла Коммунистла Союзне Ленин** орденĕпе наградăларĕ.

Аслă награда! Çак наградăра чăваш комсомолĕн тивĕçĕ те пур. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн Тăван çĕршыври тăванла ытти халăхсен ывăлĕсем пекех, комсомолăн Чăваш организацийĕ çитĕнтерĕ çамрăксем те, фронтра паттăррăн кĕрешсе, тылра вăя хĕрхенмесĕр ĕçлесе, Ленин орденле Чăваш республикин чыслăхне çÿле тытса пычĕç.

Г. ИШИВАНОВ.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТМЕЛЛИ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА ИЮНЕН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ МИÇЕ ПРОЦЕНТ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш АССР-ĕнчи уполномоченнăйĕн даннăйĕсем тăрăх).

Районсем	Лашасем	Майракаллă шултра выльăх	Сыснасем	Сурăхсемпе качакасем
Тăвай	104,6	100.3	124.1	132.0
Советски	103.9	100.0	133.9	132,1
Канаш	103.9	96.9	130.2	138,7
Çĕрпÿ	103.6	115.9	124.4	135.7
Красноармейски	103,6	106.2	136,5	150,4
Сĕнтĕр	102.5	104.5	112,5	142,2
Вăрмар	102,5	101.2	131,8	137,7
Элĕк	102,4	101,4	140,0	143,2
Чурачăк	101,9	104,9	132,5	131,8
Октябрьски	101,9	102.9	120,0	136,1
Шăхасан	101,7	105,8	122,4	141,9
Калинино	101.7	101,0	123,0	127,8
Куславкка	101,7	100.3	111,3	128,5
Йĕпреç	101,1	96.7	101,4	129.5
Вăрнар	101,2	102,0	111,7	134,1
Ишлей	101,2	101.9	109,8	143,2
Етĕрне	100.8	102.0	101,4	135,7
Сĕнтĕрвăрри	100.5	98,4	102,2	126,1
Муркаш	100.1	105,7	136.2	142,2
Чкаловски	100,1	100,2	[illegible]	132,6
Шăмăршă	100,1	97,0	100,9	149.5
Çĕмĕрле	100,0	101,8	107,8	129,4
Шупашкар	99,6	100,2	100,5	131,9
Комсомольски	99,4	99,6	110,5	132,0
Елчĕк	99,1	100,8	126,9	138,3
Хĕрлĕ Чутай	97,0	101,8	100,1	143 4
Пăрачкав	97,0	101,8	97,8	133,8
Первомайски	96,8	101,9	88,5	136,8
Кувакино	95,1	97,5	79,2	135,5
Улатăр	94,2	97,8	160,8	116,2

ĔÇШĔН ХУШСА ТӲЛЕÇÇĔ

ВĂРМАР. (Телефонпа). «Смычка» колхозра (председателĕ Александров юлташ) фермăри 10 сысна аминчен 200 çурă илнĕ. Фермăра ĕçлекен Григорьева юлташ 7 сысна аминчен 80 çурă илнĕ, ăна планран ирттерсе çурăсем илнĕшĕн ĕçкунĕ çумне хушса 6 сысна çури панă. Илларионова юлташ 8 амаран 64 çурă илнĕ, ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх, ăна 3 çурă панă. Максимова юлташ 6 сысна аминчен 52 çурă илсе çитĕнтернĕ. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх, ăна 2 çурă панă. Ферма заведующине Шнуров юлташа сысна ĕрчетмелли плана тултарнăшăн тата планпа пăхнинчен ытларах çурă илнĕшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх 2 сысна çури панă.

«Гвардеец» колхозра Кузьмин юлташ 6 сысна аминчен 62 çурă илнĕ, вĕсене лайăх çитĕнтернĕ. Çавăншăн ăна 4 сысна çури панă.

«Смычка» тата «Гвардеец» колхозсенче, сысна амисене вăхăтра чуптарса, çулталăк вĕçлениччен кашни амаран тата 10-шар çурă илсе çитĕнтерме шутлаççĕ.

И. СТЕПАНОВ.

Хулана илемлетеççĕ

ÇĔРПӲ. Чăваш халăх уявĕ çывхарнă май кунти ĕçсыннисем хулана илемлетес ĕçе тимлĕн тытăнчĕç. Хулан тĕп урамне йывăçсем лартса тухнă. Кашни çурт умнех 5 йывăçран кая мар лартнă.

Кунсăр пуçне хула центрĕнчи сада уçма хатĕрленеççĕ. Ялхуçалăх техникумĕнче вĕренекенсем садра аллейăсем тăваççĕ, чечексем лартаççĕ. Киvĕ сада та юсаса йĕркене кĕртнĕ.

П. ТЕРЕНТЬЕВ.

Общинăсен палатинче Черчилль тухса калани

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче тулашри политика пирки Черчилль премьер-министр çапла каланă:

«Эпир Франципе çыхăнса тăрас ыйтăва илсен, вăл çыхăну Сирири событисем хыççăн нумай япăхланчĕ. Англи правительстви Сирире территори тытса илесшĕн пулманнине эпĕ тепĕр хут каласа парасшăн. Сирири хамăрăн француз туссене улăштарасси çинчен эпир шутламастпăр та. Тĕнчен пĕр-пĕр пайĕнче эпир камăн та пулин харпăрлăхне вăрлама тăрăшмастпăр. Кунта ыйту Сирири Франци влиянийĕ çинчен пырать. Эпир çав влияни майлă пулма пулатпăр, анчах канашлусенче кăна. Вăл влиянине пулăшасси е ăна хавшатасси пирĕн ĕç мар. Франци Сирипе тата Ливанпа калаçса татăлса тивĕçлĕ договор тусассăн, эпир питĕ савăнăпăр. Çав договора тусанах, эпир хамăр çарсене вăл çĕршывран илсе тухса кайăпăр. Çавăнпа та пирĕнпе Франци хушшинче ку ыйтупа хирĕçÿсем пулма нимĕнле сăлтав та çук. Де Голль генерал ячĕпе Эррио пирĕн пата килесси çинчен пĕлтернине эпĕ хавасланса итлерĕм. Çакăн хыççăн пуçланакан калаçусенче эпир хамăрăн француз туссене Сирире эпир тунă ĕçсене хамăр интересемшĕн туманнине тата Францин Сирири интересĕсемшĕн эпир ырă кăмăллă пулнине ĕнентерĕпĕр тесе шанса тăрататăп».

Премьер-министр çапла каланă: Адриатика тинĕсĕн çурçĕр пайĕнче йывăрлăхсем палăрчĕç. Тито маршал çарĕсем йышăннă позицисене пула тата союзниксен Александер фельдмаршал аллинче тăракан Италири çарĕсем йышăнмалли позицисем пирки хăшпĕр йывăрлăхсем тухса тăчĕç. Пĕр вăхăтлăха çак ыйту йывăрланса каймалла пек туйăнатчĕ, пуринчен ытла çĕршывăн нумай пайĕ пирки килĕшÿ пулман чухне çарсем юнашарах тăнă вăхăтра çапла туйăнатчĕ. Çак ыйтăва дипломатиллĕ майсемпе татса пама май пулнăшăн эпĕ питĕ савăнатăп. Çак ыйтăва татса панипе Англипе Америка правительствисем пĕтĕмĕшпех килĕшеççĕ. Çав вăхăтрах вăл территорисем кам аллинче пулас ыйтăва мирлĕ конференциччен (вăл кирек хăçан пулсан та) хăварнă. Çав вăхăтчен кашни çĕршыв хальхи вăхăтра йышăнса тăракан позицисенче тăмалла.

Российăпа çыхăнса тăрас ĕç юлашки эрнере чылай лайăхланчĕ, мĕншĕн тесен Польшăпа çыхăнса тăракан пĕр ыйтăва халĕ татса панă. Миколайчика тата Англире пурăнакан ытти поляксене, çавăн пекех Витоса тата Польшăра пурăнакан ытти поляксене халех Мускава пыма чĕннĕ (вĕсен кандидатурисене Англи е Америка правительствисем сĕннĕ). Икĕ посолпа Молотов хушшинче пулса иртмелли конференцире йышлăрах ушкăнсем канашламалла пулассĕ. Вăл канашлусенче Польшăн Варшаври кальхи правительстви кăна мар, поляксен ют çĕршывсенчи представителĕсем те тата вăл правительствăпа çыхăнса тăман ытти поляксем те пулмалла. Российăна чĕннĕ çынсем тĕлĕшпе хăшпĕр йывăрлăхсене сирсе ямалла пулчĕ. Анчах та çакна астăвас пулать: вăл представительсем канашлăва кăна хутшăнаççĕ. Çав канашлусен тĕллевĕ Варшаври правительствăна аслăлатма май пуррипе-çуккине пĕлесси пулать. Ку ыйтăва виçĕ уйăх каярах татса пама пулать тесе шанса тăнăччĕ эпир. Америка правительствипе эпир малтанхи пекех пĕр шухăшлă пулса тăратпăр. Трумэн президент тройка тĕл пулассине кĕтсе тăрать тесе каланинче тата çавăн çинчен хаçатра каласа панине вуланипе эпĕ питĕ савăнтăм. Вăл тройкăна халĕ пысăк тройка темеççĕ курăнать. Ку ĕнтĕ комплимент пулать-ши,—эпĕ ăна пĕлместĕп.

И. В. Сталин килĕшме тĕл пулни çинчен пĕлтерсе, Черчилль çапла каланă: «Вăл тĕлпулу ăçта тата хăçан пуласси çинчен эпĕ калама пултараймастăп. Çавах та вăл тĕлпулу Англири пулас суйлавсен результачĕсем паларичченех, ют çĕршывсенчи салтаксем сасăланин результачĕсене пĕлтеричченех пулмалла. Çавăнпа та эпĕ тĕлпулăвăн ытти участникĕсемпе палăртса хунă çĕрте тĕл пулăп. Хальхи вăхăтра пирĕншĕн питĕ паха ыйтусем татăлмалла пулнипе, çавăн пекех тата вăл тĕлпулу ниме те тăмасть тесе калама никам та ан пултартăр тесе тата пĕрлĕхлĕ Англи сăмахне пысăк вырăна хунине шута илсе, Англи делегацийĕн составне эпĕ Эттлине кĕме чĕнтĕм. Пире никам та: «Хăвăра полномочи паман çĕртен эсир хăвăр çине обязательствăсем илмест-ĕр-и?» е тата: «Сасăланин результачĕсем сирĕн влаçа тытса илме пултарĕç», тесе калама никам та ан пултартăр тесе, эпир çапла тума йышăнтăмăр. Çавăн пирки те манпа пĕрле манăн хисеплĕ тусăм Эттли пулать. Юлашки темиçе çул хушшинче тĕнчери лару-тăру çине эпир яланах пĕр пек пăхнă тата пĕр-пĕрипе килĕштерсе тăнă. Кунсăр пуçне тата çакна та кăтартса пама май пулĕ: партисем улшăнма пултараççĕ, партисем пĕр-пĕрипе харкашма пултараççĕ, анчах тулашри политикăн чи паха ыйтăвĕсемпе эпир яланах пĕрле пулатпăр. Ку ĕнтĕ оппозицире тăракан партие сиен кÿмест».

Сеймур Кокс Черчилле пÿлсе çапла ыйтнă: Черчилль хăйпе пĕрле гестапона илсе каять-и? тенĕ (ку ĕнтĕ, лейбористсем влаçа илсен, Англире гестапо тумалла пулать, тесе Черчилль нумайăх пулмасть каланине тĕкни пулать). Вара çынсем ахăлтатса кулнă.

АРЦЫШЕВСКИЙ ШАЙКИНЧИ ТĂРАН ÇĔРШЫВА ТАВРĂНАС ТЕКЕН ПОЛЬША САЛТАКĔСЕНЕ ХĔСĔРЛЕТ

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатăн корреспонденчĕ Данфермлинран (Шотланди) çапла пĕлтерет: Файф графствинчи полици пĕр Польша салтакне персе пăрахни пирки материалсем пухса çитернĕ. Вăл салтака çав хуларан 2 мильăри поляксен концентраци лагерĕнчен тухса тарма хăтланнăшăн вĕлернĕ, теççĕ. Асăннă лагере Польпресс корреспонденчĕ Ягодзинские тытса хупнă пулнă.

«Дейли Уоркер» хаçатăн Шотландири корреспонденчĕ çапла çырать: Польшăн эмиграцири правительствине пăхăнса тăракан çар салтакĕсем Польшăна таврăнма кăмăл тусанах вĕсене хĕнеççĕ, арестлеççĕ. Кингарденри концентрациллĕ лагерьте Крук тата Клеменчук салтаксене вĕсем тăван çĕршыва таврăнасшăн пулнăшăн капрал хĕнесе пĕтернĕ. Клеменчука тимĕр хулăпа ăнран кайичченех хĕненĕ те госпитале ăсатнă. Тепĕр кун Крук хăйĕн офицерне çакăн çинчен жалоба панă, анчах капрал ăна офицер куçĕ умĕнчех каллех хĕнеме пуçланă. «Дейли Уоркер» корреспонденчĕ çырнă тăрăх, çак ĕçе тунă капралăн хушамачĕ те паллă. Çак лагерьти офицерсем салтаксене хăратаççĕ, тăван çĕршыва таврăнма кансĕрлеççĕ.

АНГЛИ ÇАРĔСЕМ РИББЕНТРОПА ТЫТНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин 21-мĕш çар ушкăнĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германире Англи çарĕсем оккупацилесе тăракан зонăра аямĕçсен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Риббентропа тытнă. Риббентроп саланса выртнă пулнă. Ăна Англи лейтенанчĕ Гамбург хулинче тытнă. Ухтарнă чухне Риббентроп çумĕнче виçĕ çыру тупнă: пĕрри—Черчилль патне, тепри—Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден патне, виççĕмĕшĕ—Монтгомери фельдмаршал патне çырнăскерсем пулнă. Çавăн пекех тата наркăмăш тултарнă кĕленче тупнă.

Риббентроп Гамбург хулине апрелĕн 30-мĕшĕнче çитнĕ, унта вăл хăй 25 çул хушши пĕлсе тăнă пĕр çын патĕнче пытанса пурăнма шутланă. Çав çын ăрăхсемпе сут туса пурăнаканскер пулнă. Анчах та вăл Риббентропа хăй патĕнче пытарса усрама килĕшмен. Вара Риббентроп пĕр уйрăм çын тытакан пансионра Рейзе хушаматлă пулса вырнаçнă. Ăна çав пансионра тытнă та. Вара ăна союзниксен Гамбургри штабне илсе кайнă. Унта ăна медицина тĕлĕшпе пăхса тухнă. Хăй çумĕнчи наркăмăш тултарнă кĕленчене Риббентроп хăех кăларса панă. Тытнă çын чăн-чăнах Риббентроп иккенне Риббентроп йăмăкĕ ĕнентерсе панă. Ăна уйччĕнех тыткăна илнĕ пулнă. Çав çын чăннипех Риббентроп иккенне çавăн пекех тата ăна хăй патĕнче пытарса усрама килĕшмен эрехпе сут туса пурăннă çын та ĕнентерсе панă.

АНГЛИ ХАÇАЧĔ ГИТЛЕР ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçат хăйĕн Каирти корреспонденчĕ панă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Корреспондент каланă тăрăх, Гитлер халĕ Эйрере. Корреспондент итлепĕ хыпарсем тăрăх, Гитлер, хĕрарăмла тумтанса, Дублин хулине пынă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлештÿллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Австрали çарĕсем Борнео утравĕ çинчи Бруней хулине йышăннă.

Америка çарĕсем Лусон тата Минданао утравĕсем çинче çапăçаççĕ. Америка авиацийĕ Сайгон, Шанхай тата Кантон районĕсенчи Япони объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ВАШИНГТОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Окинава утравĕ çинче çапăçакан Америка çарĕсем çитĕнÿсем тунă. Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем Сенага утравĕ çине (Окинава утравĕн Ороку сăмсахĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) аннă. Вĕсене хирĕç тăни пулман.

—⊙—

ХРОНИКА

Андрей Терентьевич Краснов юлташа, вăл урăх ĕçе куçнине пула, Чăваш АССР Юстици Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлессинчен хăтарнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Аркадий Эсхель

Республика çулĕ

Аслă Сталина халаласа çырнă поэма

* * *

Юратнă çулпуçăмăр, аслă учитель!
Çунса кĕрлекен çапăçу вучĕ витĕр
Эс чĕнтĕн пире паттăрла кĕрешме,
Эс чĕнтĕн ырми те канми ĕçлеме.

Эс ăслăн каланă вĕри сăмахсем
Çĕршыв вăйхалне, шанчăкне çирĕплетрĕç;
Ялсем, хуласем, пур тăван халăхсем,
Пĕр чунлă килйыш пек, пĕр харăс çĕкленчĕç.

Пĕрлештрĕç вĕсем аслă парти таврa,
Эс хушнă пек фронтшăн, пĕрле, пĕр канашлăн,
Пĕр тимĕрç лаççи пек кĕрлен çĕршывра
Хаярлăх хĕçне хурçăран туптамашкăн.

Çĕршыв ĕçĕнче, çак пулас çĕнтерÿшĕн,
Республика пирĕн юлмарĕ кая.
Вăл турĕ куллен çĕнĕрен-çĕнĕ ÿсĕм,
Вăл хучĕ çĕршывшăн пур-пĕтĕм вăя.

Çĕршыв умĕнчи тивĕçе пирĕн халăх
Чунтан кĕртсе пычĕ ĕçе, пурнăçа.
Çав ĕçĕтĕн пире ĕмĕрсем асăнмалăх
Тав турĕ çулпуç та тăван Хĕрлĕ Çар.

Ик-виç пятилетка вучахĕнче ÿснĕ
Республикăри заводсем васкасах
Çулпуçăмăр хушнă пек йышăнчĕç ĕçлĕн
Фронтпа çĕршыв панă паха заказа.

Хаяр вăрçă вучĕ çунса йăсăрланнă
Çĕртен куççа килчĕç кунта заводсем.
Эпир вĕсене кĕтсе илнĕ тăванлăн
Ĕçленĕ ĕçлеççĕ хĕрÿллĕн вĕсем

Ĕçчен чăваш ялĕ пĕр тăтăш ÿстерчĕ
Тырпул тухăçне, тăрăшса пур халăх

Юлашки Пуçламăшĕ 111, 112 тата 5-мĕш номерсенче.

Пумай колхозсем çĕршер пăт тыр илессĕ
Паха кăшкалатнă кашни гектартан.

Маттур, вăйпитти арçынсем ăсансассăн
Фронта—курайман тăшмана аркатма,
Пин-пин çамрăксем ĕçе тăчĕç хавассăн,
Хĕрарăмсем тăчĕç пĕрле ăмăртма.

Цехра станоксем пĕр самант чарăнмарĕç,
Хирте чарăнмарĕç ĕçчен тракторсем.
Куллен ÿссе пычĕ çĕн кадрсен çарĕ,
Ĕçре ÿссе пычĕç паха маçтăрсем.

«Пĕчченех ик-виç çыншăн ĕçле те ан ывăн,
Боец хĕрхенмест-тĕк фронтра хăй юнне,
Тара ан хĕрхен-ха мухтавлă çĕршывшăн,
Ĕçре çĕнсе ил фронтовик тивĕçне».

Çапла кăшни çын хăйне хăй паттăрлатрĕ,
Çапла ĕç вĕрерĕ хирте, заводра.
Хăйне чăваш халăхĕ чыслăн кăтартрĕ
Чи аслă та йывăр, хĕрÿ вăхăтра.

Ахаль-и республика тивĕçлĕ пулчĕ
Мухтав ялавне ик хутчен те илме.
Республика пĕлчĕ, республика курчĕ
Тÿр кăмăллă ĕçĕн чăн-чăн илемне.

Совет çĕрĕн чапĕ — Тăван Хĕрлĕ Çар,
Пимрен те çук мар вăл, çителĕксĕр мар.
Вăл—тутă, тумланнă; ун техника тулăх.
Вăл—паттăр, хăватлă, ялан пултаруллă.

Пур халăх чунтан вăйлăн пулăшнипе
Вăл утрĕ чăн-чăн улăп утăмĕпе.
Вăл аслăн çапла çĕнтерсе пынăçем.
Çĕкленчĕç, вăранчĕç ялсем, хуласем.
Çĕкленчĕç татах çĕршывсем, халăхсем

Кĕлтен те кĕлтен капан хывăнать,
Тумламăн-тумламăн Атăл тулать.
Атăл таппи ĕмĕрне типес çук,
Халăх хăвачĕ нихçан пĕтес çук.

Çак шухăш пирте çунса тăчĕ ялан,
Ĕçленĕ те пурăннă эпир унпалан.
Эпир нимĕскер хĕрхенмен Хĕрлĕ Çаршăн,
Вăйлантăрччĕ тенĕ ун çулăмлă маршĕ.

Эпир туса панă ăна бронепоезд,
Эпир туса панă хăватлă танксем.
Вĕсем çĕнтерÿллĕн вăрçа кĕрсе кайрĕç,
Тискер тăшмана аркантарчĕç вĕсем.

Мăн Атăл çинчен Ферапонт Головатый
Чĕнсе сас пани асилтерчĕ пире
Козьма Минина, çав питех пархатарлă,
Тахçан иртнĕ чаплă, манми ĕмĕре.

Тăван совет çĕрĕшĕн—хамăр чĕрешĕн,
Чыспа телее тăшманран сыхлама
Хăйсен укçине хывнисем çĕрпиншерĕн,
Çулпуç, эс пĕлетĕн, пирте сахал мар.

Колхозник Васянин, Дубровин, Ширманова,
Сарсков, Пугачев тата ыттисем—
Е танк, самолет-и кашнийĕ туяннă,
Çулпуç мухтавне тивĕç пулнă вĕсем.

Нумайăн вĕсем—ырă, тÿрĕ чĕрелле,
Çĕршывшăн чунне пама хатĕр çынсем.
Вĕсем пуррипе пирĕн халăх телейлĕ,
Пыратпăр çампа малалла çĕнтерсе.

Çĕртен татăлман çĕр пекех паттăр пулнă,
Пĕлетпĕр эпир паттăрсен законне.
Тырпул, нумай çимĕç эпир парса тăнă
Тăван Хĕрлĕ Çарăмăр аслă фондне.

Çÿлтен çутатать çĕнтерÿ çут хĕвелĕ,
Çулпуçăмăр, эс çутса патăн ăна.
Хĕвел çутинче пирĕн халăх телейлĕ,
Хĕвел çутинче вăл ĕçлет савăнать.

Тав та мухтав сана, аслă аттемĕр,
Сталин хĕвелĕмĕр, сан ятупа
Сакă юрра халăхпа кĕвĕлерĕмĕр,
Сан умăнта халь тăватпăр тупа.

* * *

Асаттесен çĕрĕ çинче,
Мухтавлă Атăл хĕрринче,
Эс панă ирĕк хÿттинче,
Совет ялавĕ айĕнче
тупа тăватпăр!

Çĕршывшăн шанчăклă пулма,
Ăна юнпа чуна пама,
Санăн ятна çÿлте тытма,
Эс суннă çулпала пыма
тупа тăватпăр!

Тивлетĕмĕр-чысăмăра
Куç пек тĕп-тĕрĕс упрама,
Пур халăхпа пĕрле утма,
Тăшман пулсассăн—аркатма
тупа тăватпăр!

Çĕре-аннемĕр ялан
Савса пăхса халăхпалан
Пуян тырпул туса илме,
Выльăхсем йышлăн ĕрчетме
тупа тăватпăр!

Заводсене, фабриксене
Татах та вăйлăн ÿстерме,
Хамăр телейшĕн вĕсене
Тухăçлăнрах ĕçлеттерме
тупа тăватпăр!

Тăван совет культурине
Хăватлăн чечеклентерме,
Интеллигенци çар-йышне
Хĕрÿллĕнрех çитĕнтерме
тупа тăватпăр!

Ĕçчен тесе чĕнеç пире,
Ĕçчен ятне çÿлте тытма,
Ялан та ĕмĕр-ĕмĕрех
Тÿрĕ ĕçпе чапа тухма
тупа тăватпăр!

Паян пирĕн уяв кĕрлет,
Телейлĕ халăх хĕпĕртет.
Телейлĕ халăх, ирĕк халăх
Тăван çулпуçăмăр, сана
Чи вăрăм ĕмĕр пурăнмалăх
Чун-чĕререн сывлăх сунать.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ агрономипе зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсне вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Институт районри, облаçри тата республикăри çĕрĕç органĕсенче, çавăн пекех тата опыт станцийĕсенче, наукăпа тĕпчев институчĕсенче ĕçлеме пысăк квалификациллĕ агрономсемпе зоотехниксем вĕрентсе хатĕрлет.

Институтра 4 çул вĕренмелле.

Института 17 çултан пуçласа 35 çула çитнĕ çынсене, вăтам шкултан вĕренсе тухнисене, çак предметсемпе экзамен лайăх панисене илессĕ: вырăс чĕлхипе тата литературăпа (сăмахпа каласа тата çырса), физикăпа тата химипе. 1944 çулта вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене тата 1945 çулта вăтам шкултан вĕренсе тухнă чух ылттăн тата кĕмĕл медаль илнисене института экзаменсĕрех илеççĕ.

Ялхуçалăх техникумĕсемпе зоотехника техникумĕсенчен пур предметсемпе те отлично вĕренсе тухнисене те экзаменсăрах илеççĕ.

Заявленисене институт директорĕ ячĕпе çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельхозинститут.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) автобиографи, 2) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствăна хăйне, копине мар). 3) виçĕ сăн ÿкерчĕкĕ, 4) Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна çара каймаллисен ямалла).

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Института вĕренме илмелли экзаменсем сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Институтра октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Дирекци.

3—1

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июнĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа
кашни кунах
сасăллă, илемлĕ çĕнĕ фильм
«Ч Е Р Е В И Ч К И»
кăтартать.

Сеанссем 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре пуçланаççĕ.

Билетсене малтанах илсе хума юрать.

Сельобозпромснабăн Чăваш республикинчи кантурĕ колхозсемпе совхозсене, МТС-сене тата Наркомзем системинчи хуçалăхсене ут таврашĕсем кирек мĕн чухлĕ те сутма пултарать. Ут таврашĕсене колхозсемпе совхозсем тата хуçалăхсем панă доверенноçсем тăрăх параççĕ, вĕсене ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 6 сехетчен кашни кунах параççĕ. Укçине çавăнтах тÿлемелле е Госбанк урлă куçармалла, Сельобозпромснаб конторин Госбанкри расчетнăй счечĕн номерĕ 75/2368.

Тавар илекенсен пĕр еннелле 10 пин тенкĕрен ытларах тăракан тавар турттарса каймалла пулсан, вĕсене çав тавара Шупашкарти чугун çул станцине е Шупашкарти пристане илсе çитерме транспорт параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 34, Сельобозпромснаб, Тел. 0—94.

Предприятисемпе учрежденисен тата организацисен руководителĕсене главнăй бухгалтерĕсен Виççĕмĕш Военнăй Заемăн облигацийĕсене подписчиксене алла парасси паманнине тĕрĕслес пулать. Подписчиксем ытти çĕре кайнă пирки вĕсене облигацисем пама май килмесен, çав облигацисене центральнăй тата районсенчи перекет кассисене ямалла.

Чăваш АССР-ĕнчи Госкредитпа перекет кассисен Управленийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабсельнорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00137